Василий Алендее аса илсе

# Курни-тӳсни çинчен çыратчĕ

Хăй пурăннă чухне эпир Василий Степанович Алендей ĕçченлĕхĕпе пултарулăхĕнчен тĕлĕнеттĕмĕр. Вăл хамăр йышăмăрта тăван литературăшăн çанă тавăрса, пĕтĕм вăй-халне парса ĕçлекен писательсенчен пĕриччĕ.

Алендей – прозаик, Алендей – поэт, Алендей – публицист, Алендей – критик, Алендей – тăлмач. Вăл пурнăçа, халăх ĕçĕ-хĕлне, чун-чĕрине лайăх пĕлекен писательччĕ.

Василий Степанович Алендей 1919 çулхи юпа уйăхĕн 16-мĕшĕнче Вăрмар районĕнчи Кĕтеснерте çуралнă.

Унăн нумай енлĕ пултарулăхĕ çинчен калас пулсан, чи малтанах, ман шутпа, вăл мĕнле çемьере çуралса ӳснине, унăн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ еплерех иртнине пĕлес пулать. Çакăн пирки мана писатель çапла каласа панăччĕ: "Эпĕ чухăн çемьере çуралса ӳснĕ. Пирĕн хуçалăх уйрăмах выçлăх çул арканнă. Ун чухне эпир улттăн кăна пурăннă-ха: асаттепе асанне, аттепе анне тата эпир, Михаля ятлă пиччепе иксĕмĕр. Эпĕ виççĕре пулнă ун чухне, Михаля – пиллĕкре. Пирĕн çемье выçлăха пула, Çĕпĕре, Красноярск енне куçса кайнă. Пӳрт-çурта, хуçалăха сутса хăварман пулнă. Атте хамăр хуçалăха астуса тăма хăйĕн пиччĕшне хушса хăварнă. Çĕпĕрте пĕр çул пурăнсанах, анне каласа паратчĕ мана, эпĕ аттепе аннене: "Айта, Раççее каятпăр. Айта, Раççее каятпăр", – тесе тархаслама тытăннă. Анне вара эпĕ çапла каланине ытараймасăр, аттепе пиччене вăхăтлăха Çĕпĕре хăварса, мана Чăваш çĕр-шывне, хам çуралса ӳснĕ яла илсе килнĕ. Зеленый Дола çитсен анне вĕри шыв илме перрон çине тухнă. Çав вăхăтра пуйăс тапранса кайнă. Анне ун хыççăн макăра-макăра чупнă. Мана чугун çул станци хĕрринче стрелочника парса хăварнă, япалисене аннене паллаканскер Вăрмар станцине антарма ĕлкĕрнĕ. Яла таврăнсан, хамăр пӳртех вырнаçнă эпир аннепе иксĕмĕр. Анчах акă мĕн пулса тухнă. Атте пиччĕшĕ – Хветюк, мулшăн хыпса çунаканскер, эпир таврăннăшăн кăмăлсăрланнă. Вăл пирĕн пĕтĕм хуçалăхпа, пахчапа хăй усă курасшăн пулнă. Вăл ялти куштансене пирĕн киле ертсе пырать те пӳрте вăйпах куçарса каять. Анне, мана ыталаса тытса, пӳрт тăррине сириччен те килтен тухман. Çапла, манăн виççĕ-тăваттăрах куштансен мăшкăлне тӳсме тӳр килнĕ. Çавăнпа эпĕ, ӳссе тăн кĕре пуçласан, кулаксене, куштансене чун-чĕререн курайман. 15-16 çултах комсомола кĕнĕ. Колхоза та чи малтанах çырăннă эпир. Эпĕ ялти ĕçе те хастар хутшăннă. Колхоз тунине те, ялти пуянсемпе мĕнле кĕрешнине те хам куçпа хам курнă".

Хăйĕн ашшĕпе амăшне писатель питех те ăшшăн аса илетчĕ. "Манăн атте –

Степан Егорович Егоров (ялта ăна Тяпук тесе чӗнетчӗҫ) ырă кăмăллă, ăшă, ҫепӗҫ чун-чӗреллӗ ҫынччӗ. Ялта никам та ăна кӳренсе, ҫилленсе ҫӳренине ас тумастăп. Вăл ҫирӗм ҫула яхăн Кӗтеснер ял Совечӗн секретарӗнче ӗҫлерӗ. Ял ҫыннисем кирек мӗнлу ыйтупа та чи малтанах ун патне пыратчӗҫ. Хăйсен хуйхи-суйхи ҫинчен чи малтанах аттене каласа паратчӗҫ. Атте вӗсене епле те пулин йăпатса лăплантарма тăрăшатчӗ, хуйха-суйха ҫирӗппӗн тӳссе ирттерме канаш паратчӗ, хăй пултарнă таран пулăшатчӗ. Эпӗ ача чухнех атте патне ҫӳреттӗм. Ял ҫыннисен ячӗпе хушаматне, вӗсем ăҫта пурăннине, вӗсен ачисене, мӗн чухлӗ выльăх-чӗрлӗх усранине – йăлтах пӗлеттӗм. Мӗншӗн тесен мана час-часах ял ҫыннисен выльăх-чӗрлӗхне шута илме хушатчӗҫ. Атте отпуска тухсан, ун вырăнне ял Совет секретарьне мана, 16-17 ҫулхи ҫамрăка, лартатчӗҫ.

Ман анне колхозра ӗне ферми пуҫланса кайнăранпах дояркăра тăрăшрӗ. Выльăх-чӗрлӗх фермисенче малта пыракансен, ударниксен слетӗнче те пулнă вăл. Ун чухне Чăваш республики Горький крайне кӗретчӗ.

Ҫапла, ман атте те, анне те колхозшăн, ял чыс-хисепӗшӗн, ҫӗнӗ пурнăҫшăн тăрăшакан ырă, ӗҫчен ҫынсем пулнă. Вӗсем пире хамăр килшӗн ҫеҫ хыпса ҫунма, хамăр ҫемьешӗн ҫеҫ тăрăшма вӗрентмен, вӗсем мана халăхшăн, тăван колхозшăн пурăнма хăнăхтарнă", – терӗ.

«Улми улмуҫҫинчен инҫе ӳкмест», – теҫҫӗ. Васука, пулас пысăк писателе, ашшӗпе амăшӗ тӗрӗс пăхса ӳстернӗ.

"Ялти пуҫламăш шкултан вӗренсе тухсан, эпӗ хамăн пӗлӗве малалла ӳстерес тесе, Тăвай районӗнчи Сăхăтпуҫ шкулне кайрăм. Унта мана паллă та пултаруллă С. Р. Капитонов, М. К. Гаврилов, П. Т. Ялаков, Г. Е. Егоров, Ф. Ф. Портнов, Я. С. Сидоров учительсем вӗрентрӗҫ. Вӗреннӗ чухне эпӗ Мăнҫырмара, хамăрăн Марье аппа патӗнче пурăнтăм. Унăн ывăлӗсем – пурте ăслă, пултаруллă ҫынсемччӗ. Пӗр ывăлӗ, 1919 ҫултах Хӗрлӗ Ҫара кайнăскер, Фрунзе ячӗллӗ Ҫар академийӗнче вӗренетчӗ. Вăл хăш-пӗр чухне амăшне курма киле-киле каятчӗ. Ман валли тетрадьсем, кӗнекесем илсе килетчӗ. Кайран вăл паллă ҫар ҫынни пулса тăчӗ. Семен Александрович Александров полковник Халхин-Гол патӗнче Тăван ҫӗр-шывăн Аслă вăрҫинче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Семен Александрович ман пиччен – Михалян хреснашшӗ пулнă. Вăл манпа яланах ăшшăн калаҫатчӗ, ăс парса вӗрентетчӗ".

Унăн тавра курăмӗ аталанса пыраccи, шкулта вӗреннисӗр пуҫне, вăл мӗнле ҫынсемпе хутшăннинчен те нумай килнӗ.

Ҫара кайиччен Алендей Вăрмар районӗнчи "Хӗрлӗ Ялав" хаҫат редакцийӗнче литсотрудникра ӗҫленӗ. Яланах ялтан яла чупма тивнӗ ун. Ҫав ҫулсенче ăна районта лайăх пӗлнӗ.

1939 ҫулта Василий Алендее Ҫара илнӗ. Пограничник пулать вăл. Тăван ҫӗршыв чиккине хуралласть. Ҫарта чухнех вăрҫă пуҫланать. Вăл вăрҫăн малтанхи кунӗнчех ҫапăҫăва кӗрет, Ленинградра тăшман ункине лекет. Ҫавăн пирки Василий Степанович ҫапларах аса илсе каласа паратчӗ: "Ленин хулине хӳтӗлени

манăн асран нихçан та тухас çук. Йывăр пулчĕ пире. Пĕр вăхăт кунне виççĕр грамм çăкăрпах пурăнтăмăр. Яшки те çăра шыв пек çеç. Унта çĕр улми те, сухан та çук. Чылай салтаксем апат çитменнипе халтан кайма тытăнчĕç. Апла пулин те, эпир тăшмана Ленин хули патнелле тек пĕр пусăм та ямарăмăр.

Василий Алендейĕн литературăри чăн-чăн пултарулăхĕ вăрçă хыççăн пуçланчĕ. "Ялав" журналăн 1947 çулхи 2-мĕш номерĕнче унăн сăввисен самай пысăк ярăмĕ пичетленсе тухать. Вĕсем пурте – вăрçă вут-çулăмĕ витĕр утса тухнă салтак кăмăлне уçса паракан лирикăллă сăвăсем. Тăван çĕр-шыва юратса, унăн ӳсĕмĕсемпе хавхаланса çырнă сăвăсем вĕсем. Василий Алендей халăх умне тухасси, чăн-чăн писатель çулĕ çине тăрасси çакăнтан пуçланнă та ĕнтĕ.

1947 çулта Василий Алендее çамрăк писательсен республикăри канашлăвне чĕннĕ. Канашлу пĕтсен литература каçĕ пулнă, унта вăл та хăйĕн сăввисене вуланă. Çак литература каçĕ пирки Василий Степанович çапла каласа панăччĕ. "Тăхтав вăхăчĕ пуçлансан, – терĕ вăл, – ман пата икĕ çын пычĕ. Пĕри кăтра çӳçлĕ, кăвак костюмпа, кăштах уксахлать. Хăрах урин чĕркуççийĕ хутланмасть курăнать. Фронтран аманса таврăннăскер ĕнтĕ. Эпĕ палласа илтĕм. Ку – Петр Петрович Хусанкай. Вăл мана алă пачĕ те: "Эсĕ те ман пекех уксах иккен. Уншăн ан кулян. Чĕре сывă-ха пирĕн", – терĕ. Тепри, хура çӳçлĕскер, сăн-пичĕ тĕп чăваш çыннин унăн. Лăпкăскер хăй. Вăрçăра пулнă курăнать. Кăкăрĕ çинче орденсемпе медальсен планкисем пур. Çак çын та мана Хусанкай хыççăн алă тытсах сывлăх сунчĕ те: "Сăввусене чăн-чăн чăвашла вуларăн. Тавтапуç", – терĕ. Кайран пĕлтĕм эпĕ. Ку çын – чăвашсен паллă ученăйĕ Михаил Яковлевич Сироткин пулчĕ. Пысăк, хисеплĕ çынсен ăшă сăмахĕсем мана çав тери хавхалантарчĕç".

1953 çулта Алендейĕн пĕрремĕш кĕнеки – "Пирĕн кил" пичетленсе тухрĕ. Унтанпа чылай çул иртрĕ ĕнтĕ. Халĕ вăл çырнă кĕнекесен шучĕ вăтăртан та иртрĕ. Кунта тата çакна палăртмалла. Писатель хăйĕн произведенийĕсене нихăçан та, пĕр кĕнекерен тепĕр кĕнекене кĕртсе, ик-виçĕ хутчен кăларман. Ку ĕнтĕ писателĕн пичетлесе кăлармалли произведенийĕсем çителĕклĕ пулнине, вăл тухăçлă ĕçленине кăтартса парать.

Василий Алендей çырнă проза кĕнекисенчен уйрăммăнах çаксене палăртмалла: "Тепре куриччен", "Ушкăн-ушкăн пĕлĕт иртет", "Пограничниксем", "Чикĕре", "Тăрисем çӳлте юрлаççĕ", "Çĕмĕрт çеçкере", "Юратрăм эп, хирсем, сире", "Салтак чĕри", "Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт", "Курăксене тайса çил вĕрет", "Ши! кайрăм, пи! кайрăм", "Сӳнми çăлтăр", "Виçĕ салтак", "Лаох", "Татах килсе кур", "Хирте вĕршĕнсем вĕçеççĕ", "Тăрна сасси илтĕнет", "Хĕрлĕ кĕпе", "Виçĕ ывăлпа виçĕ хĕр" т. ыт. те. Вĕсенче кашнинчех писатель пурнăçĕн автобиографиллĕ саманчĕсем пур темелле.

Василий Алендей фронтра йывăр аманать те 1943 çулта хăйĕн тăван ялне – Кĕтеснере таврăнать. Анăçра хаяр вăрçă вут-çулăмĕ алхасать. Ял ĕçченĕсем фронт валли çителĕклĕ тыр-пул, аш-какай, сĕт-çу хатĕрлесе пама тăрăшаççĕ. "Пĕтĕмпех фронт валли!" лозунг тĕпре тăнă. Алендей те яла таврăннă-таврăн-

ман хӗрӳ ӗҫе кӳлӗнет. Ял ӗҫченӗсен ҫав вӑхӑтри пӗтӗм хуйхи-суйхи, савӑнӑҫтелейӗ унӑн чун-чӗри витӗр тухнӑ темелле. Вӑл колхозри комсомол организацийӗн секретарӗ. Писатель «Ушкӑн-ушкӑн пӗлӗт иртет» повеҫре вӑрҫӑ ҫулӗсенче ҫӗнтерӳшӗн ырми-канми тӑрӑшнӑ ҫынсем ҫинчен ҫырать. Унта вӑл хӑйӗн тӑван ялӗн ятне те улӑштармасть. Кӗнекери сӑнарсем – ялти ҫынсемех. Повеҫри тӗп герой – Васук. Вӑл никам та мар – салтакран аманса таврӑннӑ Василий Степанович хӑех. Тамара пирки те ҫавнах каламалла. Анчах ун ятне автор улӑштарнӑ. Чӑннипе, ҫак хӗрача Вера ятлӑ пулнӑ. Вера Александровна Горюшева (качча тухнӑ хыҫҫӑнхи хушамачӗ – Шмелева... Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче эвакуаци йӗркипе Кӗтеснере килнӗ пулнӑ вӗсен ҫемйи. Повеҫри Курак Ҫтаппанӗпе Йӑпӑртак Мӗтри те – Кӗтеснер ҫыннисемех. Колхоз председателӗ Виктор Ефремов та унтанах. Унӑн хушаматне ҫеҫ улӑштарнӑ – Ефимов тенӗ.

Произведенире ҫырма-ҫатра, сӑрт ячӗсем те, кӳршӗ ял ячӗсем те Кӗтеснер таврашӗнчисемех. Район аппаратӗнче ӗҫлекен хӑш-пӗр ҫынсен ячӗсене те улӑштарман – ҫапла хӑварнӑ. "Ушкӑн-ушкӑн пӗлӗт иртет" повесть – пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех, чӑн пурнӑҫа ҫырса кӑтартнӑ произведени. Ӑна документлӑ повесть тесен те йӑнӑш пулас ҫук. Ан тив, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ялти пурнӑҫ епле пулнӑ – пурте ҫавӑн пек тӗп-тӗрӗс юлтӑр, тенӗ пулас автор.

"Вӗлле хурчӗ – ылтӑн хурт" – Василий Алендейӗн пӗрремӗш романӗ. Епле майпа, ӑҫтан ҫуралса тухнӑ-ха ҫак произведени? Алендей час-часах тухса ҫӳреме юрататчӗ. Тӑван яла килсен, вӑл ун чухнехи колхоз председателӗпе – пӗрле ӳснӗ Пантелеймон Мефодьевпа тӗл пулмасӑр хулана таврӑнман. Вӗсем иккӗшӗ те салтака пӗрлех кайнӑ, таврӑнасса та пӗр вӑхӑтрах таврӑннӑ. Ялта чухне вӗсем кирек мӗнле ӗҫе те пӗр-пӗринпе канашласа тунӑ. Иккӗшӗ те литературӑна ачаранах юратнӑ. Ахальтен мар ӗнтӗ Василий Степанович темиҫе ҫул каярах "Коммунизм ялавӗ" хаҫатра хӑйӗн тантӑшӗ ҫинчен "Манӑн юлташӑм – Панття" очерк пичетлесе кӑларнӑччӗ.

Яла таврӑнсан, Василий Алендей хӑйӗн чи ҫывӑх тус-юлташӗпе тӗл пулать. Сӑмах ҫине сӑмах, шӑкӑл-шӑкӑл калаҫу пуҫланать. Ҫавӑн чухне Мефодьев хайхи хӑйӗн юлташне ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илет те:

– Питӗ лайӑх тема паратӑп сана. Улатти ҫинчен ҫыр, – тет вӑл ӑна.

– Улатти ҫинчен? – тӗлӗнет Алендей. – Вӑл манӑн кукка пулать-ҫке. Мӗнпе ҫав териех килӗшрӗ вӑл сана?

– Этем вӑл. Чӑн-чӑн этем, – тет колхоз председателӗ.

Вара Мефодьев Алендее Улатти пурнӑҫӗ ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пама тытӑнать. Килӗшет писателе председатель каласа пани. Чылайччен шухӑшласа пурӑнать писатель, ялти нумай ҫынпа тӗл пулса чун-чӗререн калаҫать. Юлашкинчен "Вӗлле хурчӗ – ылтӑн хурт» романӑн тӗп сӑнарӗ – Улатти сӑнарӗ тӗвӗленсе ҫитет.

Кам-ха вӑл Улатти? Владимир Яковлевич вӑрҫӑн хаяр вут-ҫулӑмӗнче туптанса ҫирӗпленнӗ. Орелпа Курск хулисем патӗнчен Эльба, Одер шывӗ патне

çитнĕ вăл. Темиçе хутчен аманнă. Унăн пĕвĕ-сийĕнче суран йĕрĕсем туллиех. Апла пулин те, вăл улăп пек тĕреклĕ. Ăна нимĕнле çил-тăвăл та авса хуçаймасть. Унăн чун-чĕри таса, кăмăлĕ ырă. Улатти чи малтан Тăван çĕр-шывшăн, тăван колхозшăн тăрăшать. Вăл пурнăçри йăх-ях, вăйăн-шайăн ĕçлекен çынсене, кун ирттĕр те çĕр ирттĕр тесе çеç пурăнакансене тўсме пултараймасть. Унăн ĕçĕ-хĕлĕпе Василий Алендей совет çыннин сăнарне туллин кăтартса парасшăн пулнă. Ан тив, çав çын тепĕр чухне йăнăшсем те тукалать, хăш-пĕр вăхăтра виçерен тухасси те пулать. Пурнăçра чи кирли – ху тунă йăнăшсене пĕтерме чăнчăн çирĕплĕх тупасси, халăха итлесси, халăхпа пĕрле пуласси, халăх шанăçне тўрре кăларасси. Улатти сăнарĕнче çакăн пек паха енсем йăлтах пур. Çавăнпа унăн ырă сăнарĕ вулакансен чун-чĕрине яланлăха кĕрсе вырнаçать.

Романри Лисук, Пракка, Татюк сăнарĕсем те куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ. Произведенири чи трагедиллĕ сăнар – Марье-Мĕтри сăнарĕ. Патша саманинчех çуралнă Марье-Мĕтри. Ят çĕрĕ илес тесе ашшĕ-амăшĕ çак хĕрачана арçын ячĕ параççĕ. Çапла, çак хĕрачан ĕмĕрлĕхех арçын ячĕпе пурăнмалла пулать. Мĕн чухлĕ куççуль, асаплану, тискерлĕх – пурнăçра. Мĕн тери хаклă пулнă хресченшĕн çĕр. Выçă вилес мар тесе, калама çук пысăк асап, хĕн-хур, мăшкăл тўсме тивнĕ хресченĕн.

"Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт" роман – уй-хир паттăрĕсем, çăкăр тăвакансем çинчен. Унта вĕсен пĕтĕм хуйхи-суйхи, савăнăç-телейĕ курăнса тăрать. Василий Алендей кăтартса панă сăнарсем – пурте харпăр хăй еккиллĕ, хăйне майлă çынсем. Апла пулин те, вĕсен пурин те ĕмĕчĕсем пĕр – Тăван çĕр-шыва, колхоза тĕреклетесси. Алендей аран-аран пурăнкалакан, çунатсăр, халсăр çынсене юратмасть. Унăн геройĕсен тепĕр чухне сывлăхĕ начар пулин те, чун-чĕри таса, ĕмĕчĕ пысăк.

Василий Алендей хăйĕн тепĕр романне "Курăксене тайса çил вĕрет" тесе ят панă. Ку произведени – ĕне ферминчи ĕçченсем çинчен çырнă роман. Ара, Васса, Магдаль, Якур сăнарĕсенех илер-ха. Чăн-чăн хальхи ял ĕçченĕсем вĕсем. Ферма тухăçлăхне ўстерес тесе мĕнле кăна хастарлăх кăтартмаççĕ-ши вĕсем? Маларах каларăмăр-çке: Алендей произведенийĕсенчи геройсем яланах пурнăçри чи хĕрў вырăнсенче.

Васса сăнарне автор уйрăмах юратса çырса кăтартнă. Çак хĕвел шевли пек сарă çўçлĕ, çуллахи янкăр тўпе пек кăн-кăвак куçлă çамрăк арăм телей мĕн иккенне малтанлăха ăнланса илеймест-ха. Упăшки ăна, хитре те яштака пў-силлĕ пултăр тесе, колхоз ĕçне ямасть. Килте, читлĕхри пек, ĕçе ямасăр тытса усрать. Анчах Васса, кăйкăр кайăк пек, ял ĕçченĕсен шавлă ушкăнне туртăнать. Унăн чăн-чăн пурнăç юхăмне ыткăнас килет. Тўсеймест вăл: фермăна дояркăна кайса кĕрет. Кунта вăл хăйĕн чăн-чăн пысăк телейне тупать. Килте пăчăхса пурăнасси – уншăн ют. Мĕнле калас, тыр-пул та, чечек те ăшă çумăр айĕнче, хĕвел шевли айĕнче вăй илсе çĕкленет. Васса та хавхалануллă, пархатарлă ĕçре, халăхшăн тăрăшса ĕçлесе, чыс-хисеп илет.

Романра пурнӑҫӑн аслӑ ҫулӗнчен пӑрӑннӑ сӑнарсем те пур. Вӗсем Мустай Павӑлӗпе Нямук Кирили. Ҫакӑн пек ҫынсем писатель ҫуралса ӳснӗ Кӗтеснер ялӗнче чӑннипех те пулнӑ иккен. Пӗри – Нямук Кирили, тепри – Мустай Павӑлӗ. Вӗсен кӑткӑс пурнӑҫӗнче тем те пулса иртнӗ. Ҫав ҫынсен пурнӑҫ трагедийӗ ӑҫта-ха? Вӗсем иккӗшӗ те тӗплӗн тишкерсен – начар ҫынсем мар, ӗҫе юратакан, ӗҫшӗн ҫунакан, ачаранах ӗҫре пиҫӗхсе ӳснӗ ҫынсем. Ял ҫыннисем хисеплемен теме ҫук вӗсене – хисепленӗ. Тен, ҫавна пулах вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче тӑлӑх арӑмсем те куҫ хывнӑ вӗсене: хӑйсем патне хӑнана чӗннӗ, эрех ӗҫтернӗ. Ак ҫакӑнта ӗнтӗ чӑтӑмлӑх ҫитереймен. Ҫакӑн пирки арканма тытӑннӑ вӗсен ҫемье пурнӑҫӗ. Иккӗшӗ те арӑмӗсене, ачи-пӑчине пӑрахаҫҫӗ те тӑлӑх арӑмсен ӗҫки-ҫикипе киленме тытӑнаҫҫӗ. Ҫапах та ӗҫе ҫӳреҫҫӗ-ха. Ял-йыш умӗнче хӑйсен чыс-хисепне тӗппипех пӗтересшӗн мар. Кун пек пӑсӑлсан, пурнӑҫ еплерех пуласси́не те ӑнланаҫҫӗ.

Писателӗн хӑйӗн пурнӑҫӗнче те, ытти ҫынсенни пекех, "мыскарасем" пулса иртеҫҫӗ. Алендей мана ҫав Мустай Павӑлӗ пирки акӑ еплерех каласа панӑччӗ: "Тепӗр чухне ҫапла та пулса тухать, – терӗ вӑл куларах. – Произведенири сӑнара ялти пӗр-пӗр ҫынна асра тытса ҫырмастӑн, пӗтӗмлетсе тӑватӑн ҫав сӑнара. Анчах кам та пулин тупӑнать-тупӑнатех. Вара: "Эсӗ ман ҫинчен ҫырнӑ", – тесе ятлаҫса, харкашса ҫӳреме тытӑнать. Мустай Павӑлӗпе Нямук Кирили (хӑйсем ҫинчен уҫҫӑнах ҫырнӑ пулин те) ун пек пулмарӗҫ, мана тус-юлташ вырӑннех хучӗҫ. Яла кайсан, Мустай Павӑлӗпе те, Нямук Кирилипе те час-часах курнӑҫнӑ. Пӗррехинче, тӗттӗмленсе ҫитсен, Мустай ман пата хӑйӗн ҫӗнӗ арӑмӗпе пычӗ. Хутаҫа тулли четвӗрт чикнӗ. Хайхи Мустай эрех кӗленчине сӗтел ҫине кӑларса лартрӗ те, эпир пурте сӗтел тавра вырнаҫрӑмӑр. Вара Мустай манӑн алла хыттӑн чӑмӑртарӗ те: "Ваҫук, тек ан ҫыр ӗнтӗ ман ҫинчен. Йӑнӑшсем пулнӑ манӑн. Халӗ ӗмӗре пархатарлӑ пурӑнса вӗҫлеме тӑрӑшатӑп", – терӗ. Туслӑ пурӑнатӑп эп хам кӗнекери сӑнарсен прототипӗсемпе".

"Сӳнми ҫӑлтӑр" кӗнеке ҫинчен те каламасӑр иртме ҫук. Ку кӗнекене "Сӳнми ҫӑлтӑр", "Хумсем ҫырана ҫапаҫҫӗ", "Шанкуй!", "Ял амӑшӗ" повеҫсене кӗртнӗ. "Сӳнми ҫӑлтӑр" повеҫри Мариҫ сӑнарӗ – Алендей произведенийӗсенчи чи вӑйлӑ сӑнарсенчен пӗри. Мариҫ пурнӑҫ ҫулӗ тӑрӑх ҫирӗппӗн, тӳсӗмлӗн утать. Мӗнле кӑна йывӑрлӑх пырса тиенмест-ши ҫак типшӗмрех хӗрарӑм ҫине? Вӑл пур пӗрех парӑнмасть. Кирек мӗнле хуйхӑ-суйхӑ килсе тухсан та, пуҫ усса лармасть. Акӑ, фермӑра йывӑр инкек сиксе тухать. Мариҫе ҫав инкекшӗн айӑплама хӑтланаҫҫӗ. Чӑннипе вӑл нимӗн чухлӗ те айӑплӑ мар. Акӑ, фронтра унӑн упӑшки паттӑрсен вилӗмӗпе вилни ҫинчен хут килет. Каярахпа унӑн чун-чӗринче каллех юрату ҫуралать. Асаплӑ, йывӑр юрату вӑл. Фронтра вилнӗ упӑшкине те манаймасть Мариҫ. Анчах чун-чӗри урӑххи патне те туртӑнать. Фронтран йывӑр суранланса килнӗ ҫамрӑка юратса пӑрахать вӑл. Йывӑр ҫын пулать. Ялта та ун ҫинчен тӗрлӗ сӑмах ҫӳрет. "Вӑрҫӑ чарӑниччен те йӗркеллӗ пурӑнаймарӗ", – теҫҫӗ ҫынсем. Ҫапах та ун пурнӑҫӗ майлашӑнать. Аманнӑ каччӑ пӑрахмасть ӑна. Вӗсем мӑшӑрланаҫҫӗ. Ҫул иртнӗҫем ачисен йышӗ те ӳсет. Ӗнтӗ пурнӑҫ пур енчен те лайӑх пек, те-

лейлӗ пек. Çук иккен. Хуйхӑ-суйхӑ иртсе пӗтмен Марисрен. Унӑн пӗр çитӗннӗ ывӑлӗ сарӑмсӑр вилет. Тепри йывӑр чире каять. Асап-хуйхӑ çине-çинех килсе тухнипех Мариç хӑй те йӑшса çитет, ураран ӳкет. Апла пулин те çирӗп тытать вӑл хӑйне.

Çак повеçӗн содержанине мӗншӗн çапла тӗплӗн каласа патӑм-ха эпӗ? Акӑ мӗншӗн. Кӑна Василий Алендейӗн автобиографиллӗ повеçӗ темелле. Унта вӑл хӑй арӑмӗн – Дарья Софроновнӑн пурнӑçне çырса кӑтартнӑ. Чун-чӗререн шӑранса тухнӑ çак повесть. Вӑл Тӑван çӗр-шывшӑн ырми-канми тӑрӑшма, пурнӑçра чӑтӑмлӑ, çирӗп пулма чӗнекен, хавхалантаракан произведени.

"Сӳнми çӑлтӑр" кӗнекери "Ял амӑшӗ" повесть Алендей пултарулӑхӗ нумай енлӗ те пысӑк сулӑмлӑ пулнине çирӗплетсе парать. Кунта автор тӗрлӗ çынсен шухӑш-туйӑмне, чун-чӗрине уçса кӑтартать. Этем тата çут çанталӑк, çын тата унӑн тивӗçӗ – çаксем произведенин тӗп теми.

Повеçӗн тӗп геройӗ – Валентина Турбанова кӑткӑс чун-чӗреллӗ, кӑткӑс шухӑш-туйӑмлӑ çын. Вӑл телейлӗ те, çав тери телейсӗр те. Мӗнпе телейлӗ-ха вӑл? Тӳрех калас пулать: вӑл хальхи хӗрӳ пурнӑçпа, хальхи сӑпай та ӗçчен, çутӑ малашлӑха утакан çынсемпе пӗрле пурӑннипе телейлӗ. Мӗншӗн телейсӗр-ши вӑл? Çемье пурнӑçне йӗркеллӗн майлаштарса яма çук. Ача-пӑчашӑн тем пекех çунать пулин те телей çук унӑн.

Турбанова чунӗ ылтӑн темелле. Ял çыннисене пурне те ырӑ тӑвасшӑн вӑл. Ваттисене те, ачасене те... Ял çыннисене кӑна-и? Çут çанталӑка та тӗрӗс-тӗкел, илемлӗ сыхласа хӑварасшӑн. Пуриншӗн те унӑн чунӗ ыратать. Çынсен хуйхи-суйхи те хӑйӗн хуйхи-суйхи пек туйӑнать ӑна. Акӑ, комбайнер помощникне – Клатие мӗн тери пулӑшать, хӗрхенет ӑна, хӳтӗлет. Этемлӗх, çынлӑх, хӗрхенӳлӗх тени çав тери пысӑк Турбанова чун-чӗринче. Çынна çапла вӑйлӑ характерлӑ, хӑйне майлӑ кӑтартса парасси, паллах, ансат мар. Кунта писателӗн сӑнар тӑвас пысӑк ӑсталӑхӗ аван курӑнать. Çакӑнта прозаикӑн чӑн-чӑн таланчӗ.

"Ши! кайрӑм, пи! кайрӑм" повесть çинчен те каламасӑр иртме çук. Пирӗн республика хӑмла ӳстерес енӗпе Раççей Федерацийӗнче малти вырӑнсенчен пӗрне йышӑнать. Чӑваш хӑмлаçисем çинчен авалтанпах хисеплӗ ят çӳрет. Василий Алендей çуралса ӳснӗ ял çыннисем те, Мичурин ячӗпе хисепленекен колхоз çыннисем, çулленех тухӑçлӑ хӑмла пухса кӗртеççӗ. Ку колхозра хӑмла ӳстерес ӗçе пуçарса яраканӗ Федор Егорович Алендеев пулнӑ. Вӑл шӑпах Василий Алендей ашшӗн пиччӗшӗ – пӗчӗк Ваçукпа амӑшӗ Çӗпӗртен таврӑнсан, вӗсен пӳртне куçарса каякан тӑванӗ пулнӑ. Кайран вӑл хӑй те нумай нуша тӳсет, колхоза кӗнӗ. Таса чун-чӗрепе тӑрӑшать, чаплӑ хӑмлаçӑ пулса тӑрать. "Малтан йӑнӑшсем турӗ пулин те, эпӗ аттен пиччӗшӗпе – Федор Егорович Алендеевпа мухтанатӑп", – терӗ пӗррехинче Василий Алендей. – Вӑл чӑн-чӑн ӑста, пысӑк хӑмлаçӑ, çав тери хастар, пултаруллӑ çын пулнӑ. Пӗр канашлура Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн председателӗ Семен Матвеевич Ислюков çапла каланӑччӗ: "Пирӗн республикӑра икӗ чаплӑ хӑмлаçӑ пур. Пӗри – Куславкка районӗнчи Шорков. Ӑна Социализм ӗç Геройӗн ятне патӑмӑр. Тепри – Вӑрмар районӗнчи Федор Егорович Алендеев çак хисеплӗ ята илме тивӗ-

ҫлӗччӗ, анчах ӗлкӗреймерӗмӗр – ватӑ хӑмлаҫӑ ҫӗре кӗчӗ", – тенӗччӗ. Эпӗ хавхалансах хӑмлаҫӑсем ҫинчен повесть ҫырма тытӑнтӑм. Ку еҫре мана Федор Егорович – Хветук пичче хӑй нумай пулӑшрӗ".

Василий Алендей ҫарпа патриотизм темипе те нумай ҫырчӗ. Ку енӗпе уйрӑмах "Лаох", "Сивӗ хумсем ҫапаҫҫӗ", "Чикӗре" повеҫсене, "Пограничниксем", "Салтак чӗри", "Тӑшманункинче", "Салтак ҫулӗ" кӗнекесене палӑртмалла. Салтаксем ҫинчен ҫырнӑ калавсемпе новеллӑсенчен паллӑраххисем: "Тӑшман ҫаплах перет", "Сталинград Сахрунӗ", "Авланман Антун", "Салтак шухӑш-кӑмӑлӗ", "Пулков сӑрчӗ патӗнче" т. ыт. те. Алендей пӗтӗмпех хӑй курнӑ, хӑйӗнпе пӗрле вут-ҫулӑм витӗр тухнӑ, вӑрҫӑ хуйхи-суйхине пӗрле тӳссе ирттернӗ тусӗсемпе юлташӗсем ҫинчен ҫырать. Вӑрҫӑччен чикӗре пулнӑ-и Василий Алендей? Пулнӑ. Ун ҫинчен ҫырнӑ-и вӑл? Ҫырнӑ. Ленинграда хӳтӗленӗ-и писатель? Хӳтӗленӗ. Блокада терт-нушине тӳссе ирттернӗ-и? Тӳссе ирттернӗ. Ҫавсем ҫинчен ҫырнӑ-и вӑл? Ҫырнӑ. Тӗрӗсрех каласан, яланах халӑх пурнӑҫӗпе пурӑнатчӗ писатель. Тӑван халӑхӑн пӗтӗм пурнӑҫӗпе кӗрешӗвне ӳкерсе пама тӑрӑшатчӗ вӑл. "Эпӗ хамӑн ӗҫри, кӗрешӳри тусӑмсемпе юлташӑмсем ҫинчен ҫапах та питӗ сахал ҫырнӑ-ха. Вӗсен пилӗк-ултӑ проценчӗ хут ҫине ӳкерӗннӗ-ши, ӳкерӗнмен-ши? – тетчӗ Василий Степанович. – Вӗсенчен паллӑраххисене те пулин хамӑн произведенисене кӗртсе хӑварасчӗ манӑн", – тесе ӗмӗтленетчӗ.

Эпӗ Василий Степановичӑн поэзири ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен ҫакнах каласшӑн. Унӑн сӑвви-юррине, пысӑк ӑсталӑхпа ҫырнӑ "Салтак ҫулӗ" поэмӑна вулакансем кӑмӑлларӗҫ.

Алендей хӑйӗн сӑввисене чун-чӗре хушнипе ҫырнӑ. Вӗсем вулакансене Тӑван ҫӗр-шыва, пурнӑҫа юратма, ҫут ҫанталӑка хисеплеме, ӗҫшӗн ҫунса тӑма, халӑхсем хушшинчи туслӑха ҫирӗплетме, ҫын тивӗҫне ҫӳле ҫӗклеме чӗнеҫҫӗ. Вӗсем поэт чӗринче поэзин ҫутӑ ҫӑл куҫӗ тапса тӑнине ҫирӗплетсе параҫҫӗ.

"Салтак ҫулӗ" – иртнӗ хаяр вӑрҫӑ кунӗсем ҫинчен, совет салтакӗсен паттӑрлӑхӗ ҫинчен, вӗсем хамӑр Тӑван ҫӗр-шыва чун-чӗререн юратни ҫинчен ҫырнӑ поэма. Ун пек произведение хӑй вӑрҫӑ вучӗ витӗр тухнӑ, хӑй тӑшмана хирӗҫ куҫа-куҫӑн тӑрса ҫапӑҫнӑ ҫын ҫеҫ ҫырма пултарнӑ.

В. Алендей юлашки ҫулсенче ҫырнисенчен "Эп хамӑн сылтӑм урана тӗл пулни", "Нихват", "Саманта", "Праски" сӑвӑсене палӑртмалла.

Василий Степанович ачасен юратнӑ писателӗ. Ӑна час-часах шкулсенче, вӗренекен ачасен хушшинче курма пулатчӗ. Писателӗн чи малтан пичетленсе тухнӑ "Пирӗн кил" ятлӑ кӗнеки те ачасене халаллانӑ сӑвӑ кӗнеки пулчӗ. Унӑн "Пограничниксем", "Чикӗре", "Тӑшман ункинче", "Хӗрлӗ кӗпе" кӗнекисене те ачасем юратса вулаҫҫӗ.

Пӗррехинче сӑмах майӑн Василий Степанович мана ҫапла каларӗ: "Кашни кӗнеке пичетленсе тухни маншӑн пысӑк парне, телей...» Василий Степанович халӗ пирӗн хушӑра ҫук пулсан та, унӑн кӗнекисем – пирӗншӗн, пӗтӗм чӑваш халӑхӗшӗн, хаклӑ парне, вӗсем – тӑван литература пуянлӑхӗ.

**Ваҫлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ**

**«Тӑван Атӑл», 1989, 10№**